Ш12=6351
Б906
2424 РЛБ1

# БУКВАРЬ ДЛЯ ЧУВАШЪ

СЪ ПРИСОЕДИНЕНІЕМЪ РУССКОЙ АЗБУКИ.

ДЛЯ СОВМѢСТНАГО ОБУЧЕНІЯ

## ЧТЕНІЮ и ПИСЬМУ.

Ҷӑваш çыруне вӗренмелли кӗнеке.

---

СЪ РИСУНКАМИ И ОБРАЗЦАМИ ПИСЬМА.

СИМБИРСКЪ
Типо-литогр. Губ. Правленія.
1916.

2424 РЛБ1

erán
1886

Ш12=635.1
Б906

## Письменныя упражненія до букваря.



2Н24ЧРЛБ1
Чувашский
гос. университет
БИБЛИОТЕКА

Ш12=635.1я721





# а Н





*а н ан ана а*

# У

*у уна ну*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ан | на | на | ну |
| ун | а на | у на | а ну |



# Ш

*ш аш уш*

| | | | |
|---|---|---|---|
| аш | ша | шу | шан |
| уш | а ша | а шу | ша на |



# р

*р р ура*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ар | ра | ру | а нар |
| ур | а ра | у ру | у нар |

*ура, ара, анар, унар.*



## Ыы

*ы ы ыран,*
*шыра, Ы.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ыш | ы ра | шы | ыр |
| ыр | ы ран | шы ра | ыра |
| ын | ы раш | шы рар | ыраш |

*Ыран шыра. Ыра ыр.*



## Лл

*лл лаша,*
*Лар, Ала.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ал | шал | ул | ша ла |
| а ла | ша ла | у ла | ла ша |
| а лар | ша лу | у лар | ла рар |

**Лаша. Лар. Ан ула. Ыран алар. Шала лар.**

*Лаша ула. Ыран алар.*



# Мм




| | | | |
|---|---|---|---|
| ам | а нам | ман | мул |
| а ма | у нам | ма на | му ла |
| а ман | у рам | ма нам | ла рам |

Ан ман. Мана ан ман. Ан аман. Мала лар. Мана шан.

*Ан аман. Мана ан шыра.*



# Вв




| | | | |
|---|---|---|---|
| ав | ыв | вар | ву |
| шав | шыв | а вар | ву ла |
| лав | шы ва | а вал | выр |

Ан ав. Аван лаша. Шыв шыра. Ыраш выр. Вулама лар. Аван шыв. Ыран вырар.

*Вула. Аван лар. Ыраш выр.*



# Сс




| | | | |
|---|---|---|---|
| ас | са на | ма нас | са рас |
| сас | са ва | су нас | са рар |
| а сас | са вас | су рас | са рам |
| у сас | а вас | сы рас | са лам |

Ан ас. Ура сыр. Сана салам. Усал ан сун. Шыва ан сур.

*Сана салам. Ан сур. Усал ан сун.*



# Хх




| | | | |
|---|---|---|---|
| ах | хал | ху ха | хы вас |
| ух | са хал | ху са | хы рас |
| су ха | хур | ху ран | ху ра ма |
| су хал | хул | ху рал | су ха ра |

Хусан. Хуран хура. Аван хула. Сахара сухан сахал.

*Хура сухал. Хусан аван хула.*



*п пыл, хып,*
*Пуса, упа.*

# Пп

| | | | |
|---|---|---|---|
| уп | сып | пас | пур |
| хуп | хып | па сар | пыр |
| суп | хы пас | пу хар | пыл |

*Пура пура. Пуса сар. Шыв сып.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| у па | па сар | пу са | пыр |
| ху пах | па ман | пу ра | хып |
| ху пар | па лан | пу хас | хы пар |

Ыран пасар. Пасара пыр. Пура пурар. Палан пухар. Лашана хуп.

*Палан пух. Пасара пыр. Пыл пар.*



*т тата,*
*Тус, тар.*

# Тт

| | | | |
|---|---|---|---|
| ут | у тар | та та | та тар |
| сут | ху тас | ту та | ты тар |
| ват | су тас | та са | ту тар |
| вут | а тас | ту са | ту рат |
| хут | а таш | ту сан | ту пас |

Ват тутар. Тус пулар. Аван апат. Тула тухар. Тарас, вула. Тупа ан ту. Ман пата пыр. Таса шыв аван.

*Апат пар. Тула тухар Тус пулар.*



# Т̆ т̆

*т̆ т̆ ат̆а,*
*Т̆ыха, ат̆.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ат̆ | у хат̆ | та рат̆ | На т̆а |
| у лат̆ | у тат̆ | са рат̆ | а т̆а |
| ву лат̆ | а тат̆ | су рат̆ | т̆ы ха |

Лаша атат̆. Нат̆а вулат̆. Лаша тапат̆. Тарас пура пурат̆. Апат аван анат̆. Сахар ура сырат̆. Тутар т̆ыха сутат̆. Тусан пыларат̆.

*Лаша тапат̆. Нат̆а вулат̆. Хура т̆ыха.*



# Кк

*к ку, хак,*
*Курка, К*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ах | сак | па так | та ка |
| хак | вак | пу рак | а ка |

| | | | |
|---|---|---|---|
| кат | ка ла | кан | кур |
| кас | ка лак | кун | ку рак |
| кар | ка рас | кул | ку шак |

Хура така. Лаша акара. Кусар мука. Хура курак. Сана курас. Ат̆а, Макар, аната.

| | | | |
|---|---|---|---|
| а на | ту ра | ву та | а са |
| Ан на | Тур ра | вут та | ас са |
| а ла | пу ра | ват та | ху ша |
| ал ла | пур ра | ап па | хуш ша |

Атта туп. Пусса ан сур. Ватта ырра хур. Турра ан ман. Асса ан лар. Анна аппа ыраш аллат̆. Кукка, пасара пыр.

*Кусар мука. Хура така. Анна вулат̆. Рак.*






# Ăă

| | | | |
|---|---|---|---|
| ăн | ăс | у сă | пу шă |
| ă на | ă са | пу сă | ху шă |
| ă нат̆ | ă сат̆ | пу лă | ă шă |

*Пушă. Пусă. Усă. Ăс. Ăн.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| пу лă | пă ра | тă ван | сă рă |
| су лă | сă ра | тă вар | тă рă |
| ту лă | хă на | тă кар | вă рă |
| Ту рă | шă на | кă кар | вă кăр |
| ты рă | хă ла | кă кăр | тă кăр |
| ты лă | тă ла | су хăр | сă тăр |

Шурă пăтă. Пысăк пулă. Хăла тăла. Тăрă шыв. Хытă тăм. Сывă пул. Аван пурăн. Турăран хăра.

Ăса Турă парать. Сăтăр ан тăвăр. Лаша хытă утать. Турăх тутă тытать. Пулас лаша çыхаран паллă.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ул ма | сăп ка | хур са | каш та |
| сал ма | сăп са | хут ма | каш ла |
| сар ма | тăк са | сут ма | кăк ла |
| кар та | тух са | сăх ман | хăм ла |
| кал та | пух са | сых лан | хур ла |

Сăпка тăвар. Сăпса хытă сăхать. Вут хутма тăр. Ыраш пулнă, вырас пулать. Сана салма, мана улма. Вăрманта кашкăр пур. Аçа, купăста шăварма. Ула лаша тамаша, ака тăвать хашкаса. Улăхра курăк аван.

*Сăпса сăхать. Вут хутма тăр.*





# Ии

| | | | |
|---|---|---|---|
| ил | хир | кил | пир |
| иш | вир | кин | пит |
| ир | тир | тин | шит |

Улăх ути аван. Макарăн ури шăннă. Аҫа, Иван, вир вырма. Вир пăтти пит тутлă. Симукăн атти пысăк.

*Сарă тир. Иван выртат. Улăх ути.*





# Ее

| | | | |
|---|---|---|---|
| е сир | ви те | и лес | ер не |
| е пир | хир те | и рес | леш не |
| е тем | сир те | и шĕр | сер те |
| е рех | и лет | си сер | вит ре |
| пи ре | ки лет | пи сес | ат те |
| си ре | ти рет | хи рес | ан не |

Анне ир тăраť. Хурсем шывра ларнă. Есир вир вырнă, епир хир курнă. Ир тăракан тутă пулнă тет. Атте ыраш сăвăраť. Хирте апат тутлă. Сысна хырăмне ыраш пăсман тет. Павăл упа курнă тет.

*Хирте аван. Ерешмен карти. Сире салам.*



Çç




| | | | |
|---|---|---|---|
| уç | çа на | çы ран | çул |
| пуç | çа ра | çу ран | сул |
| куç | çу ра | çе çен | çар |
| каç | çур хах | çем çе | сар |
| лаç | çур та | çăм ха | ка çар |
| ка лаç | çу рăк | çăр ха | ка сар |
| ка çас | çу рăм | шăр çа | çа ва |
| а çа | çу лăм | пăр çа | са ва |

Çыру çыр. Çара çуна лашана çăмăл. Çумăр çăваť, аçа çапаť. Аппа çăпати пит хитре. Çерем уçрăм, вир акрăм, ăна вырма çын тытрăм. Тухман çын тухсан, тăман тухнă тет.

*Çыру çыр. Тăлăх çын. Çула ăшă пулаť.*



# Ĕ ĕ

*ĕ ĕ ĕмĕт, Ĕне, ĕç, çĕр.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ĕç | ĕ мĕт | çĕ рĕ | вĕ рет |
| ĕм | ĕ лĕк | çĕ нĕ | кĕ лет |
| ĕн | çĕ лĕк | тĕ нĕ | сĕ тел |
| ĕ не | сĕ лĕ | тĕ рĕ | хĕç |
| ĕ нер | ти лĕ | çĕ рĕ | хĕс |
| ĕ нен | си вĕ | вĕ рен | хĕр |

*Çĕрĕ. Çĕçĕ Епĕ. Ĕлĕк. Ĕмĕр. Тĕрĕ. Вĕр.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| хĕн | кĕр | кĕ ве | пĕ çер |
| хĕ не | кĕ рĕ | пĕ ве | пĕ çĕ |
| ĕ нер | кĕ рес | пĕ вер | пи çĕр |
| çĕ мĕр | кĕ реке | пĕ кĕ | кĕс ке |
| çĕмĕрт | кĕ ре çе | кĕ пе | ĕç кĕ |

Есĕ те çын, епĕ те çын. Хĕрлĕ ĕне пит сĕкĕшет. Çĕрĕк çăпата. Кĕрпе пулсан пăтă пиçет. Кĕтĕм кĕрекене, лартăм сĕтел хушшине. Ута çулаççĕ, тырра выраççĕ. Шыва кĕтĕм, тасалтăм, хĕрлĕ кĕпе тăхăнтăм. Тиркекене тирĕк тĕпĕ тивнĕ тет.

*Кăçал хĕл сивĕ. Ĕнв сĕкĕшет. Ĕмĕр иртет.*



# Ӳ ӳ

*ӳ тӳрӗ,*
*Ӳпре, ӳс.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ӳ х ӗ | | кӗ рӳ | ӳ лет |
| ӳт | тӳ | кӗ тӳ | у лат̆ |
| ӳс | тӳс | пӳ ре | ӳ сӗр |
| ӳ сӗр | тӳ ре | пӳл ме | у сӑр |
| ӳ кӗр | тӳ ме | ӳк ме | тӳс |
| ӳ кӗт | кӳ ме | ӳк рӗ | тус |
| ӳ кет | хӳ ме | пӳк нӗ | пӳ ре |
| ӳ лӗм | хӳ ре | сӳт нӗ | пу ра |
| ӳ кӗн | сӳ ре | хӗ рӳ | сӳ рер |
| ӳп ре | ҫӳ ҫе | хӗр хӳ | су рар |

Турӑ ӳркенме хушман. Ӳпренӗн ӗмӗрӗ икӗ ерне. Нӳхрепре сивӗ. Лаша кӳлме тӑрсан та, Турра асӑн. Кӳлӗри шыв шӑрӑшлӑ. Ҫӳҫ вӑрӑм та, ӑс кӗске. Ҫыру вӗренме ан ӳркен. Вӑрманта ӳхӗ кӑшкӑрат̆. Тӳпеми пар.

*Тилӗ хӳри Ӳхӗ кӑшкӑрат̆. Ӳкӗтлӗ пул.*



# Ђ ђ

*ђ ђĕлĕм,*
*Ђан, ђĕн.*

| | | | |
|---|---|---|---|
| ђан | ђă хă | ђу кун | пă ђă |
| ђар | ђă лан | ту кун | пă тă |
| ђун | ђă лах | ђу ман | ђĕ рĕ |
| ђул | ђă ваш | ту ман | тĕ рĕ |
| ђу ра | ђă рăш | ђă рăш | а ђаш |
| ђĕн | пă ђă | тă рăш | а таш |
| ђĕр | па ђă кă | тир | а ўа |
| ђĕ ре | ђĕл хе | ђир | а ђа |
| ђĕ лĕ | ђĕл пĕр | тун | ку ђан |
| ђĕ пĕ | ђĕн тĕр | ђун | ку тан |

Ађаш ађа. Улађа кĕпе. Пăђăр ашĕ тутлă. Ўт ђĕлхенĕн шăмми çук. Епир çиђђĕн пĕр тăван. Пахђара мунђа лараĭ. Пĕђĕкçĕ хуранăн пăтти тутлă. Ђакакăн мĕн пур сăвви те пĕрре анђах. Тăваттăн авăн çапма аван, ик кĕн икерђĕ çиме аван.

*Ђуман лаша. Ађаш ађа. Ђакак ђĕппи.*

## Ԓ ԓ ахаԓ, выԓа.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ку ԓа | а хаԓ | Па ԓа | у ԓа |
| вы ԓа | ку кӑԓ | Па ԓук | у ла |
| Пу ԓа | мӑ кӑԓ | Ку ԓук | куԓ ԓан |

Ахаԓ ан тӑр. Выԓас килсен, тула тух. Михаԓпа Иԓуш лашалла выԓаҫҫӗ. Ӑшӑ кукӑԓ ҫиме тутлӑ. Куԓа выԓат̆, Аԓтук ташлат̆. Маԓԓа карђӑк ҫум ҫумлат̆. Выԓарӑм, култӑм, утӑ ҫултӑм, ҫырла ҫеҫки пуррине пӗлмерӗм.

*Ӑшӑ кукӑԓ тутлӑ. Епир лашалла выԓарӑмӑр.*

## Ӊ ӊ ӊ мӑкӑӊ

| | | |
|---|---|---|
| ху ӊа ма | ху ӊа кам | мӑ кӑӊ |
| ху ӊа ҫа | ху ӊӑм | су пӑӊ |

Мӑкӑӊ ђеђекӗ илемлӗ. Манӑн хуӊӑм хытӑ ҫын. Хуӊамана йурасси ҫӑмӑл ӗҫ мар вӑл. Тӑрна куҫӗ пек шыв выртат̆, ман хуӊакам пир илет.

2424РЛБ1
Чувашский гос. университет БИБЛИОТЕКА



# Йй

й й йака

Йытă йал.

| | | | |
|---|---|---|---|
| ай | йал | йур | йы тă |
| пай | йа лан | йул | йы вăç |
| май ра | йа ка | йух | йы вăр |
| сай ра | су йа | йут | йых рав |
| кай ра | па йан | йу рă | йы шăн |
| уй | пу йан | йу ман | йыш лă |
| туй | ха йар | йу мах | йыс на |
| суй ла | хă йар | йул хав | хăй ма |
| май | йа рас | йул таш | Йах вар |
| хăй ра | йат лас | йус ман | Йа кур |

*Сайра. Туй. Хăйма. Йал Йурă.*

Пайан йур çăваť. Йатман пиђђе йат сараť. Йумах йуман тăрринђе. Йытă вĕрет, йан кайаť. Тарăн варта йур пур тет, йур варринђе пăр пур тет.

| | | | |
|---|---|---|---|
| йăх | йă лă | йер | йе шĕл |
| йăт | хă йă | йен | ти йе |
| йă ла | хă йăр | йеп ле | ђи йе |
| йă ва | мă йăр | йен ђĕк | ђе йе |

| | | | |
|---|---|---|---|
| йўн | йў ле | йӗс | йӗ рӗх |
| йў ҫӗ | йўн лӗ | йӗм | йӗ кӗр |
| йў ҫет | йўн сӗр | йӗр | йӗ пе |
| йў рек | йўҫен кӗ | йӗр ке | йӗп лӗ |

Майра мӑйӑра кайнӑ тет. Ђийе ҫырли йўҫенкӗ. Йӗнерђӗк лаша ҫийӗнђе. Йӗкӗреш хӑраххи йӗрсе ларай.

*Мӑйӑр тӗшӗ тутлӑ. Ђуста йўҫет. Йӗкӗреш хӑрахxи йӗрсе ларай.*

---

Йалан ӑспа ҫўресен, йалти ватӑ йатламасҭ. Йулхава йалан уйав. Ватта туйа кирлӗ, пӗђӗкҫӗ ађана сӑпка кирлӗ. Икӗ кайӑка хӑвалакан пӗрне те тытайман тет. Вӑтанман йумӑҫ пулнӑ тет, ўркенмен ӑста пулнӑ тет. Пысӑк сӑмах калиђђен, пысӑк ђӗлӗ ҫӑкӑр тыт. Пӗр кун кайас тесессӗн, ҫиђӗ кунлӑх ҫӑкӑр ил, теҫҫӗ. Вӑйӑран вӑкӑр тухай. Ҫамрӑкла вӗренеймесессӗн, ватӑлсан вӑренме хӗн вара. Ҫынтан вӑтанмасассӑн, Турӑран хӑрамасассӑн, пархатар кураймӑн, теҫҫӗ ваттисем.

Урпа утмӑл кунта кӗрекене ларай, теҫҫӗ. Кӑвакал кўллине кура ђӑмай. Аптӑранӑ кӑвакал кутӑн ђӑмнӑ тет. Кирлӗ мар катӑк пуртӑ та ӗмӗрте кирлӗ пулнӑ тет. Ватӑ ҫерҫийе хывӑхпа улталаймӑн. Килте йытӑ пӑтратма пӗлмен — йалта йашка пӗҫернӗ тет. Вӗлле хурђӗ пӗђђен нумайах пыл тӑваймӗ. Хытӑ ҫынтан хӗл варринђе те пӑр катӑкӗ ыйтса илей-

мĕн. Саншăн кашкăр та тутă пултăр-ђĕ, сурăх та тĕрĕс тăтăр-ђĕ, теççĕ хытă çынна. Тухман çын тухсан, тăман тухнă тет. Çийесси çăмăл та, ĕçлесси йывăр. Ир тăракан тутă пулнă тет. Ута пăхакан—çуран йулман, ватта пăхакан—выçă çўремен, теççĕ. Çапа пĕлменĕн пуши хăйне çаврăнса тивнĕ тет. Туман ўыханăн пилĕкне ан хуç, теççĕ. Аш пулсан хуплу тăваттăм, çăнăх çук, тесе каларĕ тет ĕлĕк пĕри. Пĕрре улталăн, иккĕ те улталăн, виççĕмĕшĕнђе макăрăн та вара, теççĕ. Выçсан çăкăр та тутлă, тăрансан пыл та йўçĕ. Çу иртсен çырлана çўремеççĕ. Çăкăр хырăма шырамасў. Çын аллинђи кукăљ пысăккăн курăннă тет. Пырна пула пуçна çийĕн, теççĕ. Нумайа хапсăнакан нимĕнсĕрех йулнă тет. Ахаљ тăриђђен кĕрĕк аркине те пулин йăвала, теççĕ. Пĕђђен автан ашĕ çиме анђах аван, теççĕ. Йытă мăнтăр та, çиме йурамасў.

(-). Çăкăр-тăвар пулсан, хура вырăс та хурăнташ. Пир-авăр тăвасси хĕр-арăм ĕçĕ. Тăйлăк-тайлăк кусакан урапа шанђăксăр. Алă-ура пур çинђе ахаљ ларни çылăх.

(!). Кĕрсе кай! Пырса лар! Иртнĕ-çўренĕ ђух кĕрсе тух! Ах, Турă, савăнтăм! Вăшт! анђах турĕ: курса та йулаймарăм! Пулас çын çамрăкранах паллă: ав Иљуш йепле! халех ватă çын пек йĕркелĕ калаçаў! Ăста çын ăстах: ĕçе тытнă, тунă, пăрахнă!

(?). Кам есӗ? Есӗ ђӑваш-и, тутар-и? Мӗн йатлӑ? Санӑн аçу-аннӳ пур-и? Есир миçенӗн пӗр тӑван? Санран аслӑ ывӑлсем, йе хӗрсем пур-и? Санран кӗçӗннисем миçе? Есӗ тӑвану-сене ху мӗн вӗреннине каласа кӑтартатӑн-и? Есӗ килте мӗн тӑватӑн? Çӑпата тума пӗле-тӗн-и? Çӑпатана миçе пушӑтран тӑваççӗ? Çӑ-пата тума йывӑр-и, хут вӗренме-и? Санӑн пӗл-мен ӗçе вӗренессӳ килет-и? Сирӗн миçе лаша? Ӗне тата пӗрре-и, иккӗ-и? Пӗр йенӗ хир, те-пӗр йенӗ вӑрман,—мӗн вӑл? Хӑш йывӑç çи-рӗпрех: çӑка-и, йуман-и?

---

## ЂӐВАШЛА САС ПАЛЛИСЕМ:

Аа Нн Уу Шш Рр Ыы Лл Мм Вв Сс Хх Пп Тт т̆ Кк Ӑӑ Ии Ее Çç Ӗӗ Ӳӳ Ђђ Йй ӆ. ң.

1 2 3 4 5 6 7 8 9 0

*Алӑпа çырнӑ сас паллисем:*



Варука аппӑшӗ пыл панӑ. Варук пылне хӑй ҫимен, Симукпа Микулайа панӑ. Вӗсем савӑннӑ.

Кӗтерне не амӑшӗ супӑђ илсе панӑ. Вӑл питне те, мӑйне те супӑђпе ҫунӑ. Унӑн пиђӗ те, мӑйӗ те, аллисем те тап-таса пулнӑ.

Амӑшӗ пӑтӑ ҫинӗ. Маруҫ ун арки ҫине пырса ларнӑ. Амӑшӗ ӑна пӑтӑ ҫитернӗ. Маруҫӑн алли ҫине шӑна пырса ларнӑ. Маруҫ шӑнана пӑтӑ панӑ. Амӑшӗ те ҫинӗ, Маруҫӗ те ҫинӗ, шӑни те ҫинӗ, пур те тӑраннӑ.

Петӗрпе Иванӑн выђасси килнӗ. Вӗсем сурӑхсем пулнӑ та, пӗр пӗрне ҫамкапа сӗкме тытӑннӑ. Вӑйӑ нађар пулнӑ: Иванӑн ҫамки мӑкӑрӑлса тухнӑ, Петӗрин куҫӗ кӑвакарса кайнӑ.

Пӗр тутар ҫывӑрма выртнӑ тет. Ҫывӑрсан ҫывӑрсан, ӑйхӑ тӗлешӗпе кӗмсӗрт! туса ўкрӗ тет.

Икӗ кађака сӗкӗшме тапратрӗҫ тет. Сӗкӗшрӗҫ сӗкӗшрӗҫ тет те, пӗри мӑйракине хуҫрӗ пӑрахрӗ тет.

Епир ађасемпе лашалла выђарӑмӑр. Иван ҫынни пулђӗ, епӗ лаши пултӑм. Мана Иван пушӑпа ҫапрӗ те, манӑн ыратрӗ: кӑштах макӑрса йамарӑм.

Епӗ пӗђӗкҫӗ ђух, ҫула пулсан, хӑва ҫулҫисене пухса кивӗ ҫӑпата ҫине тултараттӑм та: пулӑ сутат̆, пулӑ! тесе тек туртса ҫўреттӗм.

ҫуркунне Атӑл йӑлӑмне кайса йатӑмӑр та, йӑптӑхне тӑкнӑ, ҫап-ҫутӑ, йап-йака, ҫӗлен пек пулса килђӗ.

Пирӗн асатте пӗрре тутара: ҫиме лар, тесе каларӑм тет. Тутар пӗр ђӗнмесӗр сӗтел хушшине кӗрсе ларђӗ тет те, мӗн пур йашкана хӑйех ҫисе йађӗ тет.

Епӗ пӗђӗкҫӗ ђухне сӗтел хушшине ларсан, йаланах урана сулласа ларattӑм. Анне мана: ђипер лар, уруна ан сулла, амӑшӗ вилет тет апла! тет-ђӗ.

Пӗр арӑм ҫулпа утса пынӑ. Унӑн инҫе каймалла пулнӑ. Кайсан кайсан, вӑл ывӑннӑ. Вара вӑл выртнӑ та ҫывӑрнӑ. Ҫывӑрсан ӑна вӑй кӗнӗ те, вӑл хӑй кайас тенӗ ҫӗре ђасах ҫитнӗ.

Пӗрре епӗ ҫулпа пыраttӑм. Сасартӑк мана хирӗҫ вӑрмантан икӗ кашкӑр сикрӗҫ тухрӗҫ. Епӗ тем пек хӑраса ӳкрӗм. Ҫывӑхра пӗр йывӑҫ ларађ-ђӗ. Епӗ пӗр самантра ҫав йывӑҫ ҫине хӑпарса кайрӑм. Кашкӑрсем иртсе кайсассӑн, епӗ антӑм та, малалла утрӑм.

Михаљапа Куҫма пасара кайаҫҫӗ тет. Амӑшӗ: ађамсем, ман валли ҫип илсе килӗр-ха, акӑ мейӗр укҫа, тесе калађ тет. Михаљи укҫине илђӗ тет те, пасара ҫитсенех кулаҫ илсе ҫирӗ тет.

Наҫтук ҫыру вӗренсе килне таврӑннӑ. Килӗнђе амӑшӗ анђах пулнӑ. Наҫтук сӗтел хушшине ларнӑ та, кӗнеке илсе, амӑшне пӗр халлап вуласа кӑтартнӑ. Амӑшӗ савӑнса итлесе ларнӑ.

Тап-таса карташ варринҫе пӗр купа хӑйӑр пулнӑ. Аҫасем карташне тухнӑ та, хӑйӑрпа выҫҫама тытӑннӑ. Вӗсем хӑйӑра илсе пӗҫӗкҫеҫҫӗ купасем туса ҫӳренӗ. Камӑн. купи ҫӳлӗрех тесе тавлашнӑ вӗсем.

Хурсем шыва аннӑ. Вӗсем шыва кӗрсен, шыв вӗсен патӗнҫен унка пула пула хумханса кайнӑ. Кӑшт тӑрсан, шыв каллех йап-йака пулса тӑнӑ. Шывӗ тӑп-тӑрӑ пулнӑ. Хурсен урисем курӑнса пынӑ.

Иван хире ашшӗ патне ҫӑкӑр лӗҫме кайнӑ. Ҫул ҫинҫе унӑн ҫывӑрасси килнӗ. Вӑл хӑва айне выртнӑ та, ҫывӑрах кайнӑ. Хураҫка пынӑ та, ҫӑкӑрне ҫисе йанӑ.

Хураҫка кӗпер урлӑ каҫса пынӑ. Ҫӑварӗнҫе шӑмӑ пулнӑ. Пӑхаӗ, шывра унӑн мӗлки курӑнаӗ, унӑн та ҫӑварӗнҫе шӑмӑ пур. Лешинне те илеймерӗ, хӑйӗн те шыва путрӗ.

Петӗрпе Мурук Наҫтук патне хӑнана пынӑ тет. Вӗсем пахҫана кайса, ҫатан ҫумне ларнӑ тет. Наҫтукӗ ҫӑкӑр ҫӗлли ҫине ҫу ҫӗрсе пынӑ тет. Йурла йурла ҫисе лараҫҫӗ тет.

Кушак пӳрт тӑррине улӑхрӗ. Вӑл урисене хутлатса выртрӗ те, ҫывӑрса кайрӗ. Ҫерҫи вӗҫсе пыҫӗ те ун патнех ларҫӗ. Ан лар унта, ҫерҫи, темӗн курӑн, кушаксем пит ҫейе вӗсем.

Ҫуркунне ҫитсе килет. Хӗвел ҫӗре хытӑран хытӑ ӑшӑтаӗ. Йур ирӗлет, шыв йухаӗ. Кӑҫӑкӑ та папка кӑлара пуҫларӗ. Ӑшӑ йенҫен вӗҫен-кайӑксем вӗҫсе килеҫҫӗ. Ҫынсем пур те савӑннӑ.

**Аҫасем** улăха выҫама кайнă. Улăхра вĕсем турпас татăкĕсем тупнă. Ҫав турпас татăкĕсене купаласа, вĕсем пӳрт тунă. Малтан пурине тунă, унтан тăррине тунă. Пӳртин мăрйи те, алăкĕ те пулнă. Пӳрҫĕ аслă пулнă, анҫах алăкĕ пĕҫĕкҫĕрех пулнă. Пуканисем нийепле те алăкĕнҫен кĕреймен. Вара аҫасем пӳрҫĕ тăррине илнĕ те, пуканисене ҫӳлтен пӳртне кӳртсе лартнă.

**Пĕр** арăм витрепе шыв ăсса пыраҭ тет. Витри шăтăк пулнă тет. Шывĕ йухса сахалланипе кунăн витри ҫăмăлланҫĕ тет. Арăмĕ: витре ҫăмăлланҫĕ-ха тесе савăнса пыраҭ тет. Килне пырсан пăхаҭ тет: витринҫе шывĕ пĕр тумлам та йулман тет.

**Епир** пĕрре ҫикĕри анаҫ ҫинҫе тулă выратпăр. Епĕ кĕлте ҫыхрăм та, ăна тĕм ҫине леҫҫе хутăм; ҫав вăхăтра ҫурлана таҫта ҫухатрăм. Пăхкалатăп пăхкалатăп—ҫук. Ҫурлана пиҫҫе тупнă та, каламасăр тăраҭ. Атте ӳншăн ҫиленҫĕ те, йатла пуҫларĕ: ĕҫ патĕнҫе выҫамаҫҫĕ, апла ĕҫ йулаҭ! терĕ. Мана тата: кĕлте ҫыхнă ҫухне ҫурлана хул-пуҫҫи ҫине хураҫҫĕ, терĕ.

**Асламăшĕпе** пĕҫĕк хĕрĕ пурăннă. Хĕрĕ йалан ҫывăрнă. Асламăшĕ пĕр май ĕҫленĕ: вăл ҫăкăр пĕҫернĕ, урай шăлнă, ҫĕленĕ, авăрланă, пир тĕртнĕ. Пурăна киле хĕрĕ пысăкланнă, асламăшĕ ватăлнă. Асламăшĕ ҫӳрейми, ĕҫлейми пулнă. Хĕрĕ пур ĕҫе те хăй туса тăнă: вăл пĕҫернĕ, ҫунă, ҫĕленĕ, тĕртнĕ.

**Пĕр** ирхине Катуҫпа Маруҫ вăрмана кăмпана кайнă. Маруҫ пĕҫĕкҫĕ пулнă. Вĕсенĕн вăрмана пĕр пĕҫĕкҫĕ ҫырма урлă каҫса каймалла пулнă. Катуҫ ҫăлхине хывнă та, Маруҫа ҫурăм хыҫне ҫакса, шыв урлă каҫара пуҫланă.—Маруҫ, авантарах лар,мана мăйран ан пу! Аллусене ил, мана сывлама йывăр, тенĕ Катуҫĕ. Ҫапла Катуҫ Маруҫа шыв урлă йăтса каҫарнă вара.

**Епĕ** пĕрре, пĕҫĕкҫĕ ҫухне, урампа пĕҫҫенех иртсе пыраттăм. Мана пĕр усал аҫа тĕл пулҫĕ те, сулахай аллипе ҫупрĕ йаҫĕ. Епĕ йĕрсе йатăм та: ак аннене калам-ха, терĕм. Вăл кула пуҫларĕ: каласан каламасан та нимĕн те тăвас ҫук, сулахайа сут ҫук, терĕ.

**Аҫасем** пĕве хĕрринҫе выҫанă. Вĕсем шывра шапасем ларнине курнă. Вĕтĕ ҫул пуҫтарнă та, шапасене ҫулпа пере пуҫланă.

Пĕр шапи кăшт пуҫне кăларҫĕ тет те, аҫасене каларĕ тет:
— Ҫарăнăр, аҫасем, ан перĕр: сире вăйă та, пире вилĕм, терĕ тет.

**Шăшисем** хирте пĕр пĕве патĕнҫе пуранна. Ҫуркунне пулнă та, шывсем сарăлса йуха пуҫланă. Вара шăшисем пĕр ту ҫине кайнă. Ту ҫинҫе тилĕ пураннă. Шăшисене курсан, тилĕ тем пек савăннă. Вăл вĕсене пурне те ҫисе йанă. Хăй вара мăнтăрланса кайнă.

**Хĕлле** пулнă. Ҫанталăк ăшă тăнă. Вăл ҫул йур нумай пулнă. Аҫасем пĕве ҫине кайнă та, йуртан ҫын тăва пуҫланă. Хăйсен аллисем шăннă. Вĕсем ҫапах та ҫыннине туса пĕтернĕ. Ҫынни пит аван пулнă. Ун ҫăварне ҫĕлĕм хыптарнă, куҫĕсене кăмрăкран тунă. Аҫасем йур кĕлетке ҫине пăхса савăнса тăнă.

**Аҫасем** курăк ăшĕнҫе ҫĕрĕп тупнă. Ваççук ăна килне йăтса кайасшăн пулнă. Анҫах йăтма нимĕнла май пулман: ҫĕрĕпĕн йĕпĕсем ҫикнĕ. Вара аҫасем ҫĕрĕпе ҫĕлĕк ăшне хурса илсе кайасшăн пулнă. Анҫах ҫĕлĕкĕ пĕҫĕкçĕ пулнă. Ҫапла вара ҫĕрĕпе нийепле те илсе кайайман.

**Хураçка** йатлă йыттăн ҫурисем пулнă. Вĕсем карташĕнҫе утă ҫинҫе выртнă. Пĕрре Хураçка таçта тухса кайнă. Аҫаçем пынă та, пĕр ҫурине пӳрте илсе кĕнĕ. Хураçка таврăнсан, йăнăшса вĕре пуҫланă. Аҫасем йытă ҫурине илнĕ те, амăшне панă. Амăшĕ ăна ҫăварĕпе хыпса карташне илсе тухнă.

**Пĕр** ҫын пит ватăлса ҫитнĕ. Пĕрре вăл кăмака ҫине улăхасшăн пулнă, анҫах нийепле те улăхайман. Вăл вăхăтра пӳртре аҫийĕн аҫи ларнă. Вăл аслашшĕнҫен кула пуҫланă. Аслашшĕ каланă: аҫам, есĕ намăса пĕл! Аслаçу кăмака ҫине улăхайманни кулăшла мар, есĕ ухмаххи кулăшла, тенĕ.

**Пĕрре** Михаҫа вăрмана кайнă. Вăрманта вăл йуман айĕнҫе кăмпа курнă. Кăмпи ватă пулнă, ăна никам та татман. Михаҫа ăнакăна пăхмасăр кăмпана татнă та, килне илсе кайнă. Килне пырсан: акă епĕ йепле аван кăмпа татрăм, тенĕ. Кăмпи унăн ҫĕрĕк пулнă, ăна никам та ҫийекен пулман.

**Сашук** пит хăравçă пулнă. Пĕрре аслати авăтса ҫумăр ҫунă. Сашук хăранипе шкапа кĕрсе ларнă. Шкапра тĕттĕм пулнă, сывлама та йывăр пулнă, аслати сасси илтĕнмен. Ҫавăнпа вăл ҫумăр ҫуса иртсе кайсан та шкапра темĕнҫҫен ларнă. Ҫав кирлĕ сана, Сашук! Ӳлĕмрен аслатирен ан хăра.

**Пирĕн** вăкăр пур-ҫĕ. Вăл пит усал-ҫĕ. Ун патĕнҫен иртсе кайма пур те хăраҫ-ҫĕç. Пĕрре ҫапла асатте ăна кĕтĕве хăваласа кайаҫ. Вăл асаттене хирĕç тăҫĕ те, сĕксе йăвантарса йа-

ҫӗ, хӑй айне тӗркелесе ҫикрӗ. Ҫынсем вӑкӑра хуса йаҫӗҫ те, асаттене киле илсе кайрӗҫ. Ҫавантан кайран асатте нумай пурӑнаймарӗ вара – вилҫӗ. Асатте вилсен, вӑкӑра аслӑк айне илсе кайрӗҫ те, пусса пӑрахрӗҫ.

**Пӗр** арӑмӑн пит турӑх ҫийесси килнӗ тет. Ӗни хӗсӗр тет кунӑн, сӗт памасҭ тет. Кӑшт та пулин ҫапах сӗт памӗ-ши тесе, кайаҭ тет ку картана. Ӗни выртнӑ тет. Хӑпӑл-хапӑл илет тет курка та, ҫупаҭ тет кӳршӗ арӑмӗ патне.—Акка! ӗне пӑрулама выртнӑ, кӗвелӗк парса йар-ха мана, тесе ыйтаҭ тет.—Ара, те пӑрулама выртнӑ, халӗ вӑл, те ахаҫ выртнӑ? тесе каларӗ тет лешӗ.—Ӑна-кӑна пӗлмерӗм те хаҫ епӗ, тесе тухса кайрӗ тет хай арӑм.—Туман ҭыханӑн пилӗкне ан хуҫ, теҫҫӗ ҫав.

**Амӑшӗпе** хӗрӗ ҫывӑрма выртнӑ тет. Амӑшӗ кунӗпе пӗр канмасӑр ӗҫленӗ тет. Хӗрин ҫывӑрасси килмест тет, тек йурласа выртаҭ тет. Амӑшӗ: хӗрӗм, ан йурла, млнӑн ҫывӑрас килет, тесе калаҭ тет. Хӗрӗ амӑшне итлемест тет. Тата хытӑрах йурла пуҫларӗ тет. Вара амӑшӗ хӗрне пӑлтӑра хупса хуҫӗ тет. —Сана кунта йурлама аван пулӗ, терӗ тет амӑшӗ.

**Кӗркунне** пулнӑ, вӑрманта сивӗ ҫил уласа вӗрсе тӑнӑ. Сархайнӑ ҫулҫӑсем йывӑҫ ҫинҫен ӳксе, ҫилпе ҫаврӑнса вӗҫсе ҫӳренӗ. Вӗҫен-кайӑксем карти картипе пухӑнса, ӑшӑ йенелле вӗҫсе кайнӑ. Ҫук ҫынсем кӑмакисене хутма вӑрманта ҫапӑ пуҫтарса ҫӳренӗ. Пӗҫӗкҫӗ Наҫтукӑн амӑшӗ ҫирлӗ выртнӑ, вӑл пӳртрен те тухайман. Наҫтукӑн ашшӗ пулман. Ҫавӑнпа амӑшӗ ҫирлӗ ҫухне хӗрӗ ахаҫ ларман. Куллен вӑл ирхине вӑрмана кайса, пӑртакҫӑ ҫапӑ пуҫтарнӑ та, килне илсе таврӑннӑ; унтан партак кансан, татах ҫапӑ пуҫтарма кайнӑ. Пӗҫӗкҫӗ Наҫтук ҫапла тӑрӑшнипе пӳртре йаланах ӑшӑ тӑнӑ.

**Пӗр** ватӑ ҫын шыв хӗрринҫе пурӑннӑ. Унӑн икӗ аҫи пулнӑ: пӗри Петӗр йатлӑ, тепӗри Кӗркури йатлӑ пулнӑ. Кӗркурийӗ ҫиҫҫӗре пулнӑ, Петӗрӗ тӑваттӑра пулнӑ. Пӗрре ирех Кӗркурипе Петӗр ҫырмана аннӑ та, кимӗ ҫине ларса кайнӑ. Петӗр кӗреҫисемпе ишсе пынӑ, Кӗркури химӗ хӳрине тытнӑ. Вӗсем пулӑ шакӗ шыранӑ. Аҫасем шакне аслашшӗ ӑҫта хунине пӗлмен. Вӗсем шыв тӑрӑх инҫе ишсе кайнӑ. Кайсан кайсан, шакне тупнӑ. Шакӗнҫи пуллисене илнӗ те, килне илсе таврӑннӑ; таврӑнсан пуллисене аслашшӗне панӑ.

**Пӗрре** аҫсем анкартне кайнӑ. Унта вӗсем кашкӑрла выҫама тытӑннӑ. Михаҫа кашкӑрӗ пулнӑ. Микулайпа Наҫтук су-

рӑхӗсем пулнӑ. Михаҫи кашта тӑрӑх улӑм ури ҫине улӑхса кайнӑ. Микулайпа Наҫтук айалта кашкӑра кӗтсе тӑнӑ. Вӗсем айалта кашкӑра кӗтнӗ кӗтнӗ те, кӗтсе ывӑнсан, кӑшкӑра пуҫланӑ. Михаҫа кӑшкӑрсан та пыман. Унтан вӗсем Михаҫана шырама тытӑннӑ. Темӗн ҫухлӗ шыраса та, тупайман ӑна. Вара вӗсем килне кайнӑ. Кӑшт тӑрсан, Михаҫана шырама амӑшӗ те пынӑ.—Михаҫа! Михаҫа! тесе кӑшкӑрнӑ вӑл. Пӗр сас-ҫӗвӗ те пулман. Амӑшӗ вӑрмана, хире кайса шыранӑ.—Михаҫа! Михаҫа! тесе кӑшкӑрса ҫӳренӗ амӑшӗ. Михаҫи: епӗ кунта, епӗ ҫывӑрнӑ-ҫӗ! тесе лараӗ тет улӑм ури тӑрринҫе.

**Перре** кушак ҫисе тӑраӗ. Ун патне Хураҫка пыҫӗ тӑҫӗ. Кушак Хураҫкана сӑмсинҫен йаҫӗ илҫӗ. Хураҫки кушака хӳререн йарса илҫӗ. Кушак Хураҫкана куӗҫнҫен ҫавса илҫӗ. Хураҫка кушака мӑйӗнҫен йарса илҫӗ. Ҫав вӑхӑтра аппа шыв ӑсса иртет-ҫӗ. Вӑл ҫарӑнҫӗ те, кушакпа йытта шывпа ҫаш! тутарҫӗ. Тин тӳпелешме ҫарӑнҫӗҫ.

**Иванпа Петӗр** хут ҫӗлен тума шухӑшланӑ. Иван Петӗре калаӗ: Петӗр, есӗ ҫилӗм хатӗрле, епӗ хӑйӑсем шырӑп, тет. Вӗсем ҫасах ҫилӗмпе хӑйӑ тупса хунӑ. Тепӗр кунне вӗсенӗн хут ҫӗлен пулса та тӑнӑ. Вӗсем хут ҫӗлене йама кайнӑ. Анҫах ҫил пулман та, хут ҫӗлен кӑшт та кайман. Вара Петӗрпе Иван хире кайнӑ. Хирте те ҫил пулман. Темӗн ҫухлӗ ҫупса асаплансан та, хут ҫӗлен ҫӳлелле кайман. Вара Петӗрӗ: вӗр Иван! вӗр! тесе кӑшкӑра пуҫланӑ. Иван мӗн пур вӑйӗпе вӗрнӗ. Хут ҫӗлен ҫапах ҫӳлелле ҫӗкленмен, ҫӗре персе ӳкнӗ.

**Мӑнӑн** Петӗр йатлӑ йулташ вӗр-ҫенӗ пушӑ йаврӗ. Ҫав пушипе куракана пӗрне ҫапаӗ-ҫӗ. Пӗрре ҫапла ҫисе ларакан йӑмӑкӗ патне пыҫӗ те, пушипе шарт! тутарҫӗ пуҫӗнҫен. Йӑмӑкӗ йӗре пуҫларӗ. Амӑшӗ илтрӗ те, ҫупса та кӗҫӗ. Петӗртен пушине тутса илҫӗ те, хӑйне ҫаптара пуҫларӗ: ан тив ҫынна! ан тив ҫынна! ак сана! терӗ. Ҫапа пӗлмен пушӑ хӑйне ҫаврӑнса тивнӗ тесе ҫавӑнпа каланӑ та ҫав.

**Ҫуркунне** пулнӑ. Шывсем йуха пуҫланӑ. Аҫасем турпас татакӗсем илнӗ те, вӗсенҫен кимӗ туса шыва йанӑ. Кимми шыва май йухса кайнӑ. Аҫасем нимӗне пӑхмасӑр ун хыҫҫӑн. кӑшкӑрса ҫупса пынӑ. Вӗсем ҫапла ҫупса пынӑ ҫух, шывлӑ лупашкана кӗнӗ ӳкнӗ.

**Икӗ ҫын** канав алтнӑ тет. Вӗсем виҫӗ кун ӗҫленӗ тет

Виçӗ кун ӗçлесе, килне виçӗ тенкӗ илсе таврӑннӑ тет. Вӗсем виçӗ тенке уйӑраймасӑр виçӗ кун тавлашрӗç тет. Апла тавлашса тӑриҫҫен, тата виçӗ кун ӗçлес мӗн вӗсем.

**Аҫҫасем** вӑрмана кӑмпана кайнӑ. Вӗсем унта пӗрнисене туллийех тултарнӑ. *Аҫҫасем* уçланка тухнӑ та, утӑ купи çине ларса, кӑмписене сӑва пуçланӑ. Йывӑç тӗмӗсем хыçӗнҫе пӗр çын кашкӑрла уласа йанӑ. Аҫҫасем кӑмписене пӑрахнӑ та, киле ҫупа панӑ.

**Епир** пӗрре çерем çинҫе вӑрлӑх çапатпӑр. Сисмен те хамӑр, пирӗн тӗле пӗлӗт хупланӑ илнӗ, çанталӑк сӗм-тӗттӗм пулҫӗ тӑҫӗ. Унҫҫен те пулмарӗ, çил-тӑвӑл пирӗн сарӑма тырри-мӗнӗпе айӗн-çийӗн çавӑра пуçларӗ. Нимӗн тӑва пӗлместпӗр. Хӑшӗ аллине кӗреçе тытнӑ та, улӑмсене тӗрткелесе çӳрет, хӑшӗ сенӗк илнӗ те, тырӑ хырса тӑрат. Пирӗнпе пӗрле тырӑ çапакан кӳршӗ лашине утланнӑ та, пирӗн тавра сиккипе кустарса çӳрет: тӗнҫе пӗтет! тӗнҫе пӗтет! ҫӗлӗмӗм ӑçта-ши? тет хӑй. Тӑвӑл ҫарӑнсан, хамӑртан хамӑр кулатпӑр. Аптӑранӑ кӑвакал кутӑн ҫӑмнӑ тет: çавӑн пек пулҫӗ.

**Йӑлӑнтарни**. Пирӗн атте пасара каймассерен пирӗн валли кулаç илсе таврӑнат-ҫӗ. Пӗрре çапла пасартан таврӑнсассӑн, атте пурсӑмӑра та пӗрер татӑк кулаç валеçсе паҫӗ. Мана ыттисенҫен сахал панӑ пӗк туйӑнҫӗ. Епӗ кулаçа илмесӗр, йӑлӑнтарса, пӗр кӗтессе кайса лартӑм.

Атте ман йенелле çаврӑнса пӑхрӗ те: мӗншӗн илмӗстӗн тата кулаçна? терӗ. Епӗ пӗр ҫӗнмесӗр ларатӑп. Атте мана панӑ кулаç татӑкне илҫӗ те, йӑмӑксене валеçсе паҫӗ: мейӗр, çийӗр Иван татӑкне, вӑл кӗтесре йӑлӑнтарса лартӑр-ха! терӗ. Йӑмӑксем ман татӑка çисе те йаҫӗç. Кайран ыйтас-ҫӗ.—кулаç çук. Çын аллинҫи кукӑҫ пысӑккӑн курӑнат тесе ахаҫ каламан çав.

## Микулай.

—Микулай, авӑн çӑпма кай!—Вар ыратат.—Микулай, пӑтӑ çиме лар!—Пысӑк кашӑкӑм ӑçта-ши?

## Хур ури.

—Ах, хур ури тутлӑ-çке!—Есӗ çисе пӑхнӑ-и мӗн?—Çийессе çимен те, пирӗн кукка улпут çинине курнӑ.

## Ӗ ç ҫ е н.

—Анне, ыран мана иртерех тӑрат.—Мӗншӗн апла?—Ҫӗллӗме çисе йараймарӑм та, ыран ирхине çисе йарас тетӗп.

## Тăри.

Айакран, ăшă йентҫен тăри вĕҫсе килнĕ. Вăл хăйпе йăва ҫавăрнă та, ҫĕпĕсем кăларнă. Ҫĕпписемпе пурăнма ăна пит лайăх пулнă, ҫĕпписене те амăшĕ пур ҫух аван пулнă.

Пĕр аҫа серепе хурса тăрийе тытнă та, килне илсе кайнă. Тăри пӳртре ĕлĕкхи пурăнăҫĕшĕн те, ҫĕпписемшĕн те пит хуйхăрса пурăннă.

Аҫа тăрийе шыв ĕҫтерме маннă та, тăри вилнĕ. Амăшĕсĕр пуҫне ҫĕпписем те хиртe вилсе пĕтнĕ.

Мĕншĕн тытрĕ-ши тăрийе вăл аҫа!

## Ҫĕкеҫ.

Ҫĕкеҫ ҫĕкеҫ-ҫĕкеҫĕ, пĕр те канма пĕлмерĕ: кунĕпе вĕҫсе ҫӳрерĕ, улăм пĕрҫи пуҫтарҫĕ, тăмпа шăлса ҫыпăҫтарҫĕ, хăйне йăва ҫавăрҫĕ. Хăйне йăва ҫавăрҫĕ, ҫăмарта тума тытăнҫĕ; ҫăмартасем турĕ те, йăви ҫинҫен анмасĭ те, ҫĕп тухасса кĕтет вăл. Акă ҫĕпĕ кăларҫĕ: ҫĕпписем ун ҫăйлатаҫҫĕ, ҫиме апат ыйтаҫҫĕ. Ҫĕкеҫ-ҫĕкеҫĕ, кӳнĕпе вĕҫсе ҫӳрет вăл, пĕр те канма пĕлмест вăл: шăна-пăван пуҫтарaĭ, ҫĕпписене тăрантарaĭ.

## Ҫултаlăк хушши.

| | |
|---|---|
| Шурă йур ирĕлет,<br>Ҫеҫен хир ҫĕрĕлет.<br>Йешĕл курăк ӳсет...<br>Вăл хăҫан пулаĭ-ши? | Хир илемĕ кайаĭ,<br>Сĕм вăрман ҫаралаĭ,<br>Пĕр май ҫумăр ҫăваĭ...<br>Вăл хăҫан пулаĭ-ши? |
| Хĕвел хытă хĕртет,<br>Ăшă ҫил вĕркелет,<br>Сар ыраш ҫитĕнет...<br>Вăл хăҫан пулаĭ-ши? | Хирсенҫе йур анҫах,<br>Ҫырмара пăр анҫах,<br>Сивĕтет аванах...<br>Вăл хăҫан пулаĭ-ши? |

## Ҫарăк.

Паљук пиҫҫе ҫарăк акнă тет. Ҫарăкĕ темĕн пысăкĕш ӳснĕ тет. Паљук пиҫҫе ҫарăкне кăларма тытăнҫĕ тет. Туртаĭ туртаĭ тет, туртса кăлараймасĭ тет.

Ҫĕнҫĕ тет ку арăмне. Арăмĕ Паљук пиҫҫерен, Паљук пиҫҫи ҫарăкран тытнă тет. Туртаҫҫĕ туртаҫҫĕ тет, туртса кăлараймаҫҫĕ тет.

Арăмĕ ҫĕнҫĕ тет хăй хĕрне. Хĕрĕ амăшĕнҫен, амăшĕ ашшĕнҫен, ашшĕ ҫарăкран тытнă тет. Туртаҫҫĕ туртаҫҫĕ тет, туртса кăлараймаҫҫĕ тет.

Ҫӗнҫӗ тет хӗрӗ хӑйсен анҫӑкне. Анҫӑкӗ хӗртен, хӗрӗ амӑшӗнҫен, амӑшӗ аппӗнҫен, аппӗ ҫарӑкран тытнӑ тет. Туртаҫҫӗ тет, туртса кӑлараймаҫҫӗ тет.

Анҫӑкӗ ҫӗнҫӗ тет кушакне. Кушакӗ анҫӑкран, анҫӑкӗ хӗртен, хӗрӗ ӑмӑшӗнҫен, амӑшӗ аппӗнҫен, аппӗ ҫарӑкран тытнӑ тет. Туртаҫҫӗ туртаҫҫӗ тет, туртса кӑлараймаҫҫӗ тет.

Ҫӗнҫӗ тет кушакӗ шӑшийе. Шӑшийӗ кушакран, кушакӗ анҫӑкран, анҫӑкӗ хӗртен, хӗрӗ амӑшӗнҫен, амӑшӗ аппӗнҫен, аппӗ ҫарӑкран тытнӑ тет. Туртрӗҫ туртрӗҫ тет те, туртрӗҫ кӑларҫӗҫ тет.

## Сармантей.

Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет, ӑна шӑши пынӑ тет те, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет. Сармантей те йӗрет тет, сарӑ ҫӑххи те какалаҭ тет. Хапхи калаҭ: манӑн та уҫӑлса хупӑнас, тет.

Анаҭ тет пӗр вӑкӑр шыва куллен кун.—Хапха есӗ мӗншӗн уҫӑлса хупӑнатӑн? тесе ыйтаҭ тет.—Уҫӑлса хупӑнмасӑр, тесе калаҭ тет: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ, ӑна шаши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ. Сармантей те йӗрет, сарӑ ҫӑххи те какалаҭ, тет. Вӑкӑр калаҭ: еппин манӑн та мӗкӗрсе анас пулӗ, тет.

Мӗкӗрсе анаҭ тет шыв хӗррине. Шыв калаҭ: мӗншӗн, вӑкӑр, мӗкӗретӗн? тет.—Мӗкӗрмесӗр, тет: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет; Сармантей те йӗрет тет, сарӑ ҫӑххи те какалаҭ тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнаҭ тет. Шыв калаҭ: манӑн та хумханас еппин, тет.

Пӗр ҫӗнӗ-ҫын шыв ӑсма анаҭ.—Шыв, есӗ мӗншӗн хумханатӑн? тет.— Хумханмасӑр, тет: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет; Сармантей те йӗрет тет, сарӑ ҫӑххи те какалаҭ тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнаҭ тет, вӑкӑрӗ те мӗкӗрет тет. Ҫӗнӗ-ҫын калаҭ: манӑн та пӗр витрене ҫапса ҫӗмӗрес, тет. Ҫапса ҫӗмӗрет витрине, таврӑнаҭ килне.

Хуҥамӑшӗ ҫуста ҫараҭ тет.—Кин, мӗншӗн хӑрах витрепе анҫах ӑсса килтӗн? тет.—Хӑрах витрепе анҫах пулмасӑр, тет: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ тет; ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ тет; Сармантей те йӗрет тет, сарӑ ҫӑххи те какалаҭ тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнаҭ тет, вӑкӑрӗ те

мӗкӗрет тет, шыв та хумханат̆, тет. Хуҫамӑшӗ калат̆: манӑн та ҫустана кӑларса ывӑтас еппин, тет. Кӑларса ывӑтат̆ тет ҫустине.

Ывӑлӗ кайнӑ вӑрмана. Таврӑнат̆ вӑрмантан. Ывӑлӗ калат̆: мӗншӗн йашка пӗҫермерӗр? тет. Амӑшӗ калат̆: Сармантейӗн сарӑ ҫӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ; ӑна шӑши пынӑ та, хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ; Сармантей те йӗрет, сарӑ ҫӑххи те какалат̆, хапхи те уҫӑлса хупӑнат̆, вӑкӑрӗ те мӗкӗрсе анат̆, шыв та хумханат̆, ҫӗнӗ ҫын та хӑрах витрине ҫапса ҫӗмӗрнӗ, тет. Ывӑлӗ калат̆: манӑн та хӑрах атта кӑларса ывӑтас, тет. Вӑл та кӑларса ывӑтрӗ тет. Пӗтрӗ.

---

# РУСҪКІЙ ОТДѢЛЪ.

## РУССКАЯ АЗБУКА.

**Аа, Бб, Вв, Гг, Дд, Ее, Жж, Зз, Ии, Іі, Кк, Лл, Мм, Нн, Оо, Пп, Рр, Сс, Тт, Уу, Фф, Хх, Цц, Чч, Шш, Щщ, Ъъ, Ыы, Ьь, Ѣѣ, Ээ, Юю, Яя, Ѳѳ, Йй.**

---

1) а, и, ы, у, в, л, м, н, р, й.
2) і, е, о, я, ю, ъ, ь, ѣ, э.
3) п, б; т, д; к, г, х; щ, ж; с, з.
4) ц, ч, щ, ф, ѳ.
5) е.

1) а, и, ы, у, в, л, м, н, р, й.

Анна, Алла, Инна, Ирина, Варула, Вила, Вавила, Варнава, Варвара, Лавра, Мина, Марина, Нина, Римма, Рай, Май,* Выры, Вылa.

2) і, е, о, я, ю, ъ, ь, ѣ, э.

і. (=и). Іулій, Арій, Урій, Иларій.

е. (=йе). Ева, Евва, Елена, Евменій, Ириней, Валерій.

о. Омврій, Ной, Іона, Ермолай, Алоній, Нонна.

я. (=йа). Илія, Іунія, Іулія, Марія, Меланія, Валерія, Іларія, Ананія, Евлалія, Іуліанія,

ю. (=йу). Юлій, Юлія.

ъ. Нилъ, Лавръ, Мавръ, Наумъ, Рувимъ, Мануилъ, Авивъ,

Авр*аа*мъ, Арі*а*нъ, Іулі*а*нъ, Илі*а*нъ, Виві*а*нъ, Марі*а*нъ, Урі*и*лъ, Евв*у*лъ, Ел*и*мъ, Веніам*и*нъ, Валері*а*нъ, Оръ, Мир*о*на, Ром*а*нъ, Віан*о*ръ, Іер*о*нъ, Іо*а*ннъ, Іерон*и*мъ, Аар*о*нъ.

**Ь.** Авель, Янв*а*рь, Іюнь, Іюль.

**Ѣ.** *(=йе).* В*ѣ*ра, В*ѣ*на, Апр*ѣ*ль.

**Э.** *(=е).* Эм*и*лія, Эрив*а*нь, Э*о*ль, Эн*е*й.

**3) п, б: т, д; к, г, х; ш, ж; с, з.**

**п. б.** Па, пе, пи, по, пу, пы, пѣ, пя; ба, бе, би, бе, бу, бы, бѣ, бя; па, ба, пе; бе, пи, би, по, бо, пу, бу, пы, бы, пѣ, бѣ, пя, бя; папа, папе, папи, папо, папу, папы, попа, попи, попу, попы, пупа, пупы; баба, бабу, бабы, боба, бобу, бобы, бубе; поба, побе, поби, побу, побы.

**т. д.** Та, те, ти, то, ту, ты, тѣ, тя; тата, титу, тита; да, де, ди, до, ду, дѣ, дя; дѣда, дѣду, дѣды, додо, доду, дуда, дуди, дядя, дядѣ, дядю; та, да, те, де, ти, ди, то, до, ту, ду, ты, ды, тѣ, дѣ, тя, дя; туга, туды, тудѣ, дата, дате, дати, дату, даты, дета, дита, диту, диты, дитя, дѣти, дяде.

**п, б, т, д.** Пита, пито, питу, питы, пота, поте, пото, поту, пута, пути, путы, пыта, пыту, пята, пяти, тепе, типа, типу, топа, топо, тупа, тупу, тяпа; бѣда, бѣдѣ, бѣду, бѣды, бода, буда, буде, буди, буду, даба, дабы, добы, доба, добу, доби, дуба, дубы, дыбу, дыбы; пада, паде, пади, паду, педа, пода, поди, подо, поду, поды, пуда, пуды, пяди; допа допе, допу, допы, допи, допя, дупа, дупе; бата бате, бати, бато, бату, баты, батю, батя, бита, бите, биту, биты, бота, боту, боты, буту, буты, буте, быти, быту, таба, табу, тебѣ, тыбы.

**к, г, х.** Ка, ке, ки, к*о*, ку, кѣ, кака, каки, како, каку, куку; га, ге, ги, го, гу, гѣ, гага, гаги, гаго, гагу, гига, гиге, гигу, гуга, гугу, гика, гака, гаку, гука, гоки, гику, гике; ха, хе, хи, хо, ху, хѣ; киха, хоха, куху, хака, хека, хика, хока, хука, хуку, кага, гаха, хаха.

**п, б; т, д; к, г, х.** Паки, пика пики, пику, поко, пока, поку, капа, капе, капи, кипа, кипы, копа, копу, копо, купа, купи; така, тами, таку, тика, токо, току, туки, кате, кати, каты кату, кита, киту, киты, кота, коту, коты, кута, куты; бака, баки, буку, бека, беки, бекѣ, беку, бика, бока, боки, боку, бука, буку, быка, быки, быку, бяка, баку, кабы, кубу, кубы; дика, дики, дику, дока, доку, дыка, дыки, кида, киды, куда; дага, до-

га, догу, дуга, дуги, дугу, дугѣ; гада, гаду, гады, года, году, годы, гуда, гуду, гуды; баго, бѣги, бѣгу бога, бого; гиба, гибе, гоба, гибе, гоба, гобу, губа, губи, губу, губы; пѣга, пѣгу, пига, пога, погу, пуга, пуги; гапа, гапи, гапу, гипа, гопа, гипу, гопы; тага, тига, тога, тогу, туга, туги, тягу, тяга, гати, гату, гаты, гета, гиты, гота, готе, готи, гото, готя, гута, гуты, гуто; паха, поха, похе, похи, похо, поху, пуха, пуху, пыха, пухи, баха, бахи, баху, беху, буха, буху, бухи, туха, тухи, тихо, тиху, тиха, тихи, хата, хату, хаты, хатѣ, хити, хота, хотѣ, хотя; духа, духи, духу, дыха, дыху, хода, ходи, ходу, ходы, худа, худу, худы.

**ш, ж; п, б; т, д; к, г, х.** Ша, ше, ши, шо, шу, шѣ; шаша, шиша, шише, шашу, шашо, шашѣ; жа, же, жи, жо, жу, жѣ; жижа, жижу, жиже; паша, паши, пашу, пиши, пишу, поша, поши, пошу, шипа, шипи, шипу, шипы; шиба, шиби, шибу, шуба, шубы, шубѣ; таша, ташу, тешу, теши тише, тиши, туша, туши, шата, шату, шаты, шута, шуту; даша, даши, дашу, душа, душу, души, дыша, дыши, дышу; каша, каши кашу, кашѣ, коша, коше, кушу, шака шаки, шаку, шика, шику; гаша, гаше, гашу, гиша, гоша, гошу, гуша, гуши, шага, шаги, шагу, шига, шуга; шаха, шиха, шуху; пажа, пожа, пожи, пожу, пужа, пыжи, пыжу; бѣжа, бѣжи, бижа, божа, боже, божи, божу, бужу, жаба, шабу, жабѣ; тажа, тажу, тоже, тужа, тужу, тужи, тяжи, жато, жату, жаты, жито, жите, жити, жита, житу; даже, дажу, дежа, дужи, дожи, жада, жида, жиду, жиды; кажи, кажу, каже, кожа, кожи, кожу; жака, жаки, жука, жуку, жуки, гажу, гожа, гожу, гужа, гужи, гужу, гуже, гижа, хижи, хожа, хоже, хожи, хуже, жиха, жихи, жиху, жуха жуху.

**с, з; п, б; т, д; к, г, х; ш, ж.** Са, се, си, со, су, сы, сѣ, сю, ся, соса, соси, сосу, сосы; за, зе, зи, зо, зу, зы, зѣ, зю, зя, заза, зазѣ, зази, зазю, зазя; саза, сиза, сизу, сизы, заса, засе, заси, засо, засу, засы; паси, пасу, писа, писы, поса, посе, поси, посу, посы, сипа, сипу, сыпа, сыпи, супа, супу, супы; баса, басу, басы, бѣсу, бѣсы, боса, босо, босу, буса, бусы, себѣ, сиба, соба, собе, соби, собо, собу, собы, сяба; теса, тесу, тесе, тесы, сати, сота, соту, соты, сыта, сыты, сысу, сята, сада, сади, садо, саду, сады, садя, сода, соду, суди, суду, суды; коса, косу, киса, кису, косп косѣ, косы, куса, кусы, кусо, куси сака, саки, саку, сока, соки, соку, суку; каза, казу, казы,

коза, козу, кози, козѣ, сака, заки, зако, заку, зыка, зыку; гасе, гасы, гаси, гасу, госу, гуси, гусы, гусѣ, гусю; газе, газу, газы, гуза, гузу, зага, загѣ, заге, заги, заго, загу, зига, зигу; соха, сохи, сохѣ, суха, сухе, сухо, сыхо; сажа сажѣ, сажи, сажу, сижу, сожа, сужу; паза, пазу, пазы, поза, пози, позу, позы, позя, пуза, запа, запе, запи, запо, запу, запы; заба, заби, забе, забо, забу, зобу, зобы, суба, зубе, зубы, зыба, зыби, зяби. заба; таза, тазу, тазы, туза, тузѣ; зата, зате, зати, зату, заты, затю, зятя, зѣта, зятю, зятя; доза, дозу, дѣ, дозя, зада, заде, зади, задо. заду, зады, зида, зуда, зуди, зуде; заха, захи, заху, захо, хозя; заша, заше, заши, зашу, зиша; зажа, зажи, зажу, зажо, жазы.

Пра, пре, при, про, пру, пры, прѣ, пря, прю; кра, кре, кри, кро, кру. кры. крѣ, кря, крю; тра тре, три, тро, тру, тры, трѣ, тря, трю; шра, шре, шри, шро, шру, шры, шрѣ, шря; сра, сре, сри, сро, сру, сры, срѣ, сря, срю; хра, хре, хри, хро, хру, хры, хрѣ, хря, хрю.

Бра, бре, бри, бро, бру, бры, брѣ, бря, брю; гра, гре, гри, гро, гру, гры, грѣ, гря; дра, дре, дри, дро, дру, дры, дрѣ, дря, дрю; жра, жре, жри, жро, жру, жры, жрѣ, жря, жрю; зра, зре, зро, зру, зры, зрѣ, зря, зрю.

Тла, тли, тле, тло, тлу, тлы, тля, тлю, тлѣ; дла, дле, дли, дло, длу, длы. для длю, длѣ.

Впа, впе, впи, впо, впу, впы, вея, впѣ; вса, все, вси, всо, всу, всы, вся, всю, всѣ, вта, вте, вти, вто, вту, вты, втя, втю, втѣ; вша, вше, вши, вшо вшу.

### 4) ц, ч, щ, ф, ѳ.

Ца, це, ци, цо, цу, цы; ац ец, иц, оц, уц; цка, цку, цки; ча, че, чи, чо, чу; чра, чре, чри, чро, чру, чка, чки, чке, чко, чку; чла, чле, чли, члу; чта, чту, чти, чте; вча, вче, вчи, вчо, вчу; ща, ще, щи, шу; тащи, тащу, теща, тещи, тоща, тошу; фа, фе, фи, фо, фу, фы, фѣ, фя, фю; ѳа, ѳе, ѳи, ѳо, ѳу; ѳра, ѳри.

### 5) ё (=*йо*).

Вё, лё, мё, нё, рё, пё, бё, тё, дё зё, фё, ѳё. Ёжъ, ёршъ, ёлка, моё, твоё, своё, вёсла, лёдъ, мёдъ, гнётъ, рёвъ, пёс, тёсъ, дёготь, дёргать. Ѳёкла, овёсъ, орёлъ, осёлъ, дёрнъ, хорёкъ, конёкъ, Пётръ, Семёнъ, извёстка, бичёвка, верёвка, берёзка, мёрз-

лый, лёгкій, тёртый, лепёшка, перепёлка, ребёнокъ, телёнокъ, небо, нёбо.

Стра, стре, стрѣ, стро, стру, вста, всту, вслу, взды, вздо, вско, вскру, встре, встря, взгро вздра, вздро.

Страдать, сарада, страхъ, стрекоза, стрѣльба, стремглавъ, этрогать, стружка, вставить, вступить, вслухъ, вслушаться, вздымать, вздыхать, вздорожать, вздохнуть, вскочить, всколебаться, вскопать, вскормить, вскружиться, встревожить, взгроможденіе, взгромоздить, вздрагиваніе, вздрогнуть.

Ай, ей, ій, ой, уй,ый, ѣй, юй, яй,.

Божій, вѣчный, всеблагій, всевѣдующій, всеправедный, всемогущій, вездѣсущій, вездѣсущій, неизмѣняемый, всѣдовольный, всеблаженный, шедрый, милостивый, долготерпѣливый, сильный, святый. Вставай, взирай, взимай, бей, пей, дорогой, здравствуй, клюй, исполняй.

Воззвалъ, падаль, комаръ, букварь, дикарь, отказъ, приказъ, мазь, вздремнулъ, куль, поклонъ, посконь, стонъ, Тамбовъ, морковь, свекровь.

Сѣ, съѣ, вѣ, въѣ, обя, объя, обѣ, объѣ, сю, сью, изя, изъя, подѣ, подъѣ, вя, вья, рѣ, рьѣ, си, сьи, тю, тью, те, тье, мя, мья, дя, мья, тя, дья, вю, вью; съѣздъ, съѣхать, въѣхать, объявить, обѣздъ, сьютить, изъянъ, подъѣздъ, подёмъ, вьявь, вьюнъ, вьюшка, вьюга, бѣльё, ружьё, копьё, скамья, бадья, братья, листья, ульи, воробьи.

Вѣкъ, вѣнокъ, въѣцаться, въѣзжать; въ книгу, въ училище, въ классъ, въ улей, въ амбаръ; въ банѣ, въ дорогѣ, въ избѣ, въ изгнаніи, въ стопѣ, въ крѣпости, въ стычкѣ.

Вс, воз, взо, вы, низ, низо, на, пере, пра, пре, раз, разо, роз, су.

Взволновать, взрыть, взвыть, возвеселить, возмужать, возблагодарить. Взорвать, взойти, взобраться. Выбраться, выдернуть, выздоровѣть, выгладить, выбѣлить. Низложить, низводить,, низвергнуть, низойти, перевозить, передавить, переговорить, переспорить, перевѣдаться, переночевать. Превозносить, преградить, превышать, превратить. Раздѣлить, разгромить, развеселить. Разогрѣть, разодрать. Розговѣнье. Суглинокъ, сугробъ, сугробикъ, сумракъ, суставъ. Суглинистый, сугробистый,

сумрачный. Пасѣка, пасынокъ, падчерица. Прадѣдъ, прабабушка, правнукъ, праправнукъ.

Баба, папа, бабочка, папочка, трубы, трупы, бары, пары, бобы, попы, бухъ, пухъ, балка, палка, бѣлъ, пѣлъ, блоха, плоха, обора, опора, бить, пить, люблю, луплю, бочка, почка, выбить, выпить, выбросить, выпросить, побрать, попрать, заборъ, запоръ, столбы, столпы, пороги, пороки, густъ, кустъ, гость, кость, грива, крива, голосъ, колосъ, груба, крупа, гладь, кладь, сгинуть, скинуть, нога, сноха, голодъ, холодъ, гогочетъ, хохочетъ, дуги, духи, слуги, слухи, гвоздь, хвостъ, дачка, тачка, пойди, пойти, дядя, тятя, плоды, плоты, доля, Толя, домъ, томъ, дымъ, тынъ, дочкй, точка, дуло, Тула, доска, тоска, дверь, Тверь, дѣло, тѣло, задъ, садъ, зубъ, супъ, зало, сало, полозья, колосья, коза, коса, заборъ, соборъ, зѣвъ, сѣвъ, жаръ, шаръ, жестокъ, шестокъ жаль, шаль, жарить, шарить, жить, шить, жалость шалость, жило, шило, сажа, Саша, тужить, тушить, жесть, шесть, жутко, шутка, годъ, ходъ, глазъ, классъ, день, тѣнё, дворецъ, Творецъ.

Пылъ, пыль, голъ, голь, гладъ, гладь, битъ, бить сталъ, сталь, далъ, даль, долъ, вдоль, тронъ, тронь, гнилъ, гниль, жаръ, жарь, шестъ, шесть, цѣлъ, цѣль, паръ, парь, снятъ, снять, вонъ, вонь, ѣлъ, ель, цѣпъ цѣпь, плотъ, плоть, лѣзъ лѣзь, мѣлъ, мелъ, мель, кладъ, кладь, братъ, брать, съ глазъ, сглазь, дуренъ, дурень, трусъ, трусь, уголь, уголъ, щеголъ, щегол, вѣсъ, весь, вихоръ, вихорь, кровъ, кровь, скарбъ, скорбь шаръ, шарь, русъ, Русь.

---

| | | |
|---|---|---|
| Муха мала. | Ноги босы. | Люди рады. |
| Пила тупа. | Дуги туги. | Щуки рыбы. |
| Сума худа. | Руки голы. | Дядя дома. |
| Мухи малы. | Гуси наши. | Маша дома. |
| Пилы тупы. | Куры рябы. | Сади сады. |
| Руби дубы. | Суши шубу. | Тащи сани. |
| Руби липу. | Буди Ваню. | Купи дыню. |

| | |
|---|---|
| Мука была сыра. | Упа—рѣка. |
| Дуга была туга, | Руби эти ели. |
| Катя была мила. | Маша ѣла уху. |

Катя шила шубу.
Таня жила дома.
Маша била Васю.
Баба мыла руки.
Мыши пили воду.
Люди пили врно.
Паша мыла щеки.
Машѣ дали каши.
Рыбы было мало.
Дунѣ дали маку.
Маша была рада маку.
Няня была рада сыну.
Теща была рада зятю.
Дядѣ надо было муки.
Тетѣ надо было муки.
Нянѣ была баня.
Няня рада была банѣ.
Мама дала нянѣ мыла.
Она была рада.
Павлу дали много квасу.
Мишѣ нынче дали книгу.
Стали бабы пѣсни пѣть.

И я хочу ухи.
Иди сюда, Оля.
Мама дала ухи.
Оля ѣла уху.
Купи Васѣ юлу.
Ему надо юлу.
Купи дядѣ чаю.
Ему надо чаю.
Я даю Васѣ эту юлу,
а Машѣ дала ту юлу.
Эта юла наша, а та юла
ваша.
Сѣни новы. Сѣно сыро.
Щели малы. Рѣпы нѣту.
Дѣти сѣли на сѣно.
Давай книгу. Читай сказку.
Сѣдой дядя. Зимой снѣгъ.
Зашей шубу. Иди скорѣй.
Теплѣй стало. Воюй храбро.
Ищи рыбу. Спой пѣсню.
Тяни сѣти. Купи дыню.
Рой яму. Жуй корку.

## К ӗ л ӗ с е м.

Ашшийӗн, Ывӑлийӗн, Святой Сывлӑшийӗн йаҫӗпе. Амин.

Ей Турӑ, хӗрхенсем мана, ҫылӑхлӑ ҫынна.

Ей Турӑ, Турӑ Ывӑлӗ Іисус Христос, Хӑвӑн ҫӑн таса Анӳпе, мӗн пур святой ҫынсем кӗл-тунипе ҫырлах пирӗ. Амин.

Мухтав Сана, Туррӑмӑр, мухтав Сана.

Ей ҫӳлти Патша, Есӗ ҫуна лӑплантаратӑн, Есӗ тӳрӗ Сывлӑш, Есӗ пур ҫӗрте те пур, Есӗ пурне те пултаратӑн, пур ырӑлӑх та Санран тухаҭ, ҫӗрӗлӗх те Есӗ паратӑн: пирӗн ӑша кӗрсе вырӑнаҫ, пур усалтан та тасат пире, ырӑ Турӑ, пирӗн ҫунсене ҫӑл.

Святой Турӑ, Святой Хӑватлӑ, Святой Вилӗмсӗр, ҫырлах пире.

Мухтав Ашшӗне, Ывӑлне, Святой Сывлӑшне халӗ те, ки-

рек хӑҫан та, ӗмӗр ӗмӗрех. Амин.

Ђӑн таса Виҫ-Ипостаҫлӗ Турӑ, Ху йатушӑн ҫырлах пире. Ей Турӑ, ҫылӑхран тасат пире; ей Патша, епир йӗркесӗр пурӑннине каҫар; ей Святой Сывлӑш, пирӗн вӑйсӑрлӑха килсе тӳрлет.

Ей Турӑ, ҫырлах.

Ей ҫӳлти Аттемӗр, Санӑн йату хисеплентӗр, Санӑн патшалӑху килтӗр, Санӑн ирӗкӳ ҫӗр ҫинђе те ҫӳлти пекех пултӑр; пайан пурӑнмалӑх ҫӑкӑр пар пире; епир хамӑра парӑмлӑ пулнисене каҫарнӑ пек, пирӗн парӑмсене каҫар пире; ҫылӑха ан кӳрт пире, усалтан хӑтар пире.

Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр, савӑн! Санпала Турӑ, тивлетлӗ Маріа: Есӗ пур хӗр-арӑмсенђен те мухтавлӑ. Санран Ҫурални те мухтавлӑ, Есӗ пирӗн ђунсене Ҫӑлакана ҫуратнӑ.

Ей Турӑ, етеммӳсене ҫӑл, Хӑвӑн халӑхна ырӑ курмалла ту, ђӑн тӗне тытса тӑракан пирӗн аслӑ Патшана НИКОЛАЙ АЛЕКСАНДРОВИЧА тӑшмансене ҫӗнтерме пар, патшалӑхна Хӑвӑн хӗресӳ хӑвађӗпе усра.

Ей Турра ҫуратнӑ Хӗр, Сана асла хурса хисеплеме тӗрӗс тивӗҫлӗ, Есӗ пирӗн Туррӑн ӗмӗр мухтавлӑ таса Амӑшӗ; Есӗ херувимсенђен те аслӑ, серафимсенђен те мухтавлӑ, Есӗ хӗр халлӗн Сӑмах Турра ҫуратнӑ, Есӗ Турӑ Амӑшӗ, Сана аслӑлатпӑр.

Ей Турӑ, пурин те куҫӗсем Сан ҫине ӗмӗтленсе пӑхаҫҫӗ, Есӗ пурне те кирлӗ вӑхӑтра ҫимӗҫ паратӑн, Хӑвӑн ырӑлӑхлӑ аллуна уҫса, пур ђуна та тӑрантаратӑн.

Тав та пуҫ Сана, пирӗн Турӑ Христос, Хӑвӑн ҫӗр ҫинђи ырӑлӑхупа пире тӑрантарнӑшӑн; ҫӳлти патшалӑхна та кӳртмесӗр ан хӑвар пире.

Ей Турра йурӑхлӑ пулнӑ святой *(йатне кала)*, есӗ мана ђас пулӑшакан, ман ђунӑмшӑн кӗл-тӑвакан, епӗ сана тархасласа йӑлӑнатӑп, маншӑн Турра кӗл-ту.

*Святой Ефрем кӗлли.*

Ей ман ђунӑма пӑхса усракан Патша Турӑ, епӗ йулхава йересрен, хуйха ӳкесрен, пуҫа асла хывасран, кирлӗ мара калаҫасран ђарса тӑр мана. *Ӳксе пуҫҫапмалла.*

Мана, Ху ђуруна, таса шухӑш, йӑвашлӑх, тӳсӗмлӗх, йуратас кӑмӑл пар. *Ӳксе пуҫҫапмалла.*

Ей Патша Турӑ, мана хам ҫылӑхӑмсене курса тӑма пар, ҫын ҫинђен айӑпласа калаҫасран ђарса тӑр: Есӗ ӗмӗр ӗмӗрех мухтавлӑ. Амин. Ӳ...

# ОБЪЯВЛЕНІЕ.

Въ складѣ при Симбирской чувашской учительской школѣ имѣются слѣдующія изданія на чувашскомъ языкѣ:

| | | |
|---|---|---|
| 1. | Новый Завѣтъ въ переплетѣ | 50 к. |
| 2. | Новый Завѣтъ и псалтирь въ переплетѣ | 75 к. |
| 3. | Псалтирь | 25 к. |
| 4. | Молитвенникъ | 12 к. |
| 5. | Требникъ, ч. 1-я | 1 р. 30 к. |
| 6. | Требникъ, ч. 2-я | 70 к. |
| 7. | Октоихъ | 1 р. — |
| 8. | Сборникъ молитвъ, пѣснопѣній и чтеній изъ службъ Минеи мѣсячной, Тріоди цвѣтной и молебствій | 1 р. 30 к. |
| 9. | Службы Страстной седмицы | 1 р. 30 к. |
| 10. | Сборникъ молитвъ, пѣснопѣній и чтеній изъ службъ Тріоди постной, выпускъ первый | 75 к. |
| 11. | Чинопослѣдованія литургій святыхъ Василія Великаго и Григорія Двоеслова | 35 к. |
| 12. | Великiй канонъ св. Андрея Критскаго | 5 к. |
| 13. | Всенощное бдѣніе и литургія св. Іоанна Златоустаго | 50 к. |
| 14. | Парастасъ | 25 к |
| 15. | Послѣдованіе молебнаго пѣнія, пѣваемаго во время бездождія | 10 к. |
| 16. | Послѣдованіе во святую и великую недѣлю Пасхи | 15 к. |
| 17. | Наставленіе въ Законѣ Божіемъ для начальныхъ училищъ разныхъ наименованій и вѣдомствъ архіепископа Агаѳодора | 35 к. |
| 18. | Книга для духовно-нравственнаго чтенія и первоначальнаго наставленія въ Законѣ Божіемъ Аѳинскаго | 45 к. |
| 19. | Свв. Кириллъ и Меѳодій | 5 к. |
| 20. | Сборникъ поученій, сказанныхъ въ церкви при Симбирской чувашской школѣ священникомъ В. Никифоровымъ | 20 к. |
| 21. | Евангельская исторія епископа Ѳеофана | 45 к. |
| 22. | Святѣйшій патріархъ Гермогенъ | 5 к |
| 23. | Схимонахъ Вассіанъ | 5 к. |
| 24. | Страстная седмица въ Іерусалимѣ | |

**Цѣна 25 коп.**

Ю1690
02421

Съ требованіями обращаться къ инспектору Симбирской чувашской учительской школы *Ивану Яковлевичу Яковлеву*.

4.15p.